# Куçман пурлăхăн пĕрлехи кадастрĕ пирки

***Çĕр тата куçман пурлăх çывăх вăхăтрах пĕрлехи çыхха пĕрлешĕç. Мĕн тĕллевпе куçман пурлăхăн пĕрлехи кадастрне тумалла-ха? Çакăн пирки паян Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ А.М. СТАЛЬСКАЯ ăнлантарса парать.***

**– Алла Михайловна, куçман пурлăхăн пĕрлехи кадастрĕ пирки паян нумай калаçаççĕ. Вулакансене кадастр мĕн иккенĕпе тата вăл мĕн енĕпе кирлине ăнлантарса параймăр-ши?**

– Тĕслĕхрен, çĕр участокĕшĕн хăйсен правине кăтартма граждансем халĕ çĕрпе ĕçлекен кадастр палатине каяççĕ. Унта туса панă кадастр планĕ çĕр правине патшалăх регистрацийĕ тумалли тĕп документ шутланать. Куçман пурлăхăн техника паспортне вара БТИре тăваççĕ. Çак пайланăва пĕтерме çĕр участокĕсемпе куçман пурлăха шута илмелли пĕрлехи система патне пымалла та.

Çакнашкал система вăл – куçман пурлăхăн Патшалăх кадастрĕ. Унта куçман пурлăхăн пур объекчĕсен характеристики те пулĕ: объектăн вырăнти координачĕсем, çĕр участокĕн чиккисем, çурт-йĕре çырса пани, вĕсен база хакĕ.

Куçман пурлăхăн пĕрлехи Патшалăх кадастрĕ кăна харпăрлăх прависене патшалăх енчен хӳтĕлессине гарантилет, патшалăх та, çынсем те çакăн чух кăна çĕр участокĕпе вĕсем çинчи капиталлă строительство объекчĕсен паллă кăтартăвĕсемпе усă курайраççĕ, вĕсене хуçалăх çаврăнăшне кĕртейреççĕ.

**– Куçман пурлăх кадастрне тăвассипе Чăваш Енре ĕçсем епле пыраççĕ?**

– Ку ыйтупа халĕ пур енлĕ ĕçлетпĕр. Çĕр тата ун çинчи пурлăх наци пуянлăхĕн тĕп енĕсем. Вĕсемпе рационаллă та перекетлĕ усă курасси унăн хуçин – патшалăхăн, гражданинăн е юридициллĕ вăйра тăракан предприятин – тĕллевĕ пулмалла. Çакна тĕпе хурса республикăри пур çĕрсемпе куçман пурлăха та шута илсе вĕсен харпăрлăх прависене регистрацилемелле.

Çĕрпе тата ытти куçман пурлăхпа эффективлă усă курма ЧР Президенчĕ 2006 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче “Чăваш Республикинче çĕр участокĕсемпе куçман пурлăха патшалăх кадастр учетне илессипе вĕçлемелли хушма мерăсем çинчен” Указ кăларчĕ. Унта çак ĕçе 2008 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен вĕçлеме вăхăт панă. Çапла вара куçман пурлăхăн патшалăх кадастр учетне тăвассине Чăваш Республикинче 2008 çулта е Раççей Федерацийĕнчинчен 3 çул маларах вĕçлеме май пур.

Чăваш Республикинче куçман пурлăхăн пĕрлехи патшалăх кадастр учетне тăвасси темиçе енлĕ пулса пырать. Кăçалхи июньре эпир çак ĕçĕн уйрăмах пысăк пайне пурнăçларăмăр: пур çĕр участокĕсене те патшалăх кадастр учетне тăратрăмăр. Кунпа пĕр вăхăтрах республикăра çĕр участокĕсем тĕлĕшпе правасене харпăрлăх шайĕпе чикĕлесе уйăрас, хыççăн регистрацилес процесс пырать. Паянхи куна ЧР территорийĕнче Чăваш Республикин харпăрлăх правине 590 çĕр участокĕпе, муниципаллă йĕркелӳсенне 1226 çĕр участокĕпе палăртнă.

Кадастра капиталлă строительствăн пур объекчĕсене те кĕртме вĕсене муниципаллă пĕрлешӳсен территорийĕсенче техника инвентаризацийĕ тăвас ĕç пырать. Кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне патшалăх техника учетне республикăри куçман пурлăхăн 73 процентне тăратнă та.

Кунпа пĕрлех республикăра муниципаллă районсемпе хула округĕсен территорийĕсен электронлă карттисене тăвас ĕç анлă пырать.

**– Электронлă карттăсем пирки тĕплĕнрех каласа пама çук-ши?**

– ЧР Правительствин йышăнăвĕпе кăçал республика территорине самолет çинчен ятарлă техника хатĕрĕсемпе ӳкерсе илчĕç, кун хыççăн муниципаллă йĕркелӳсен территорийĕсен 1:2000 тата 1:10000 масштаблă ортофотопланĕсене хатĕрлерĕç.

Электронлă карттăсемпе патшалăх влаç органĕсем, вырăнти самоуправлени органĕсем çĕр мониторингне ирттерме, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе территорисенчи çĕр йĕркелĕвĕсене ирттерме усă курĕç.

**– Куçман пурлăхăн пĕрлехи кадастрне туни рядовой çынсене мĕн парать?**

– Кадастр патшалăх интересĕсемшĕн çеç мар, уйрăм çынсемшĕн те тата предприяти-организацисемшĕн те пĕлтерĕшлĕ. Тĕп тĕллев кунта çĕр участокĕсемпе капиталлă строительство объекчĕсен пĕрлехи учет системи пулсан кирек кам та кĕске вăхăтрах куçман пурлăх тĕлĕшпе кирлĕ документсене илессипе хальхи пек уйăх ирттермесĕр кĕске вăхăтрах алла илесси. Кунсăр пуçне хăй илекен çĕр участокĕ çинче куçман пурлăх пур пулсан, гражданин çĕр кадастрне ертсе пыракансенчен пĕтĕмĕшле информаци илсе туянас ĕçе саккунлă туса ирттерĕ.

Куçман пурлăхăн пĕрлехи кадастрĕ эффективлă ĕçлени ипотекăна та аталантарĕ.

**– Паян граждансем хăйсен харпăрлăх прависене регистрацилесси вĕсем заявлени çырнипе пулса пырать. Вĕсем хăйсен харпăрлăхне кадастра кĕртчĕр тесе хавхалантару пур-и?**

– Çапла, паян ку ĕç ирĕклĕ, анчах куçман пурлăхпа суту-илӳ тăвасси тата ăна еткере парса хăварасси пирки эпир малтанах шутласа хăвараймастпăр-çке. Кирлĕ документсемсĕр вара ку ĕçсене вăхăтра пурнăçлама çук.

Кашни гражданин хăйĕн пурлăх прависене вăхăтра тата юридицилле харпăрлăха тĕрĕс кĕртсен, пурăнакиле куçман пурлăхпа ăна кĕске вăхăтра сутма е тата ытти ĕçсене тума пултарать: килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллатнă кредит илме салука хывма, еткере хăварма, парнелеме, сутма, арендăна парса тупăш илме.

Патшалăх граждансене хăйсен харпăрлăхĕн тулли праваллă хуçи пулма “дача амнистийĕ çинчен саккун” йышăнчĕ. Халĕ пахча хуçисем те, гараж тытакансемпе уйрăм çурт пуррисем те куçман пурлăхпа çĕр участокĕсене çăмăллатнă йĕркепе харпăрлăха куçарайраççĕ. 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен çакăнта тӳлемелли патшалăх пошлинин виçине те 500 тенкĕрен 100 тенкĕне, правасене патшалăх регистрацийĕ тумалли вăхăта 30 календарлă кунран 10 куна чакарчĕç.

Нумай граждансен пĕрлехи пай харпăрлăхĕпе ял хуçалăх çĕрĕсем çинче çĕр пайĕсем пур. Çĕр пайĕсем – çĕр харпăрлăхĕн вăхăтлăх форми. Çавăнпа та граждансен çав пайсене те регистрацилемелле, хыççăн вĕсемпе хăйсем пĕлнĕ пек усă курмалла.

## Мировые судьи на страже закона

# В районе – второй судебный участок

Помимо судей Моргаушского районного суда Чувашской Республики правосудие на территории Моргаушского района Чувашской Республики осуществляет и мировой судья судебного участка №1 Моргаушского района Чувашской Республики.

Согласно ст.1 ФЗ “О мировых судьях в РФ” от 17 декабря 1998 года мировые судьи в Российской Федерации (далее - мировые судьи) являются судьями общей юрисдикции субъектов Российской Федерации и входят в единую судебную систему Российской Федерации. Полномочия, порядок деятельности мировых судей и порядок создания должностей мировых судей устанавливаются Конституцией Российской Федерации, Федеральным конституционным законом «О судебной системе Российской Федерации», иными федеральными конституционными законами, настоящим Федеральным законом, а порядок назначения (избрания) и деятельности мировых судей устанавливается также законами субъектов Российской Федерации.

В настоящее время на территории Моргаушского района ЧР расположен всего один судебный участок мирового судьи Салдыркиной Т.М.

Однако согласно Закону Чувашской Республики от 15 ноября 2007 года №74 в Моргаушском районе ЧР будет создан 2 судебный участок.

Указанный закон установил границы, на которые будет распространяться юрисдикция каждого из судебных участков.

Так юрисдикция судебного участка №1 будет распространяться на следующие сельские поселения: Александровское сельское поселение (д. Васькино, с. Александровское, д. Дворики, д. Ойкас-Абаши, д. Паймурзино, д. Сосновка, д. Юрмекейкино), Моргаушское сельское поселение (с. Моргауши, д. Малиновка, д. Синьял-Моргауши, д. Сюрла-Три, д. Шептаки), Орининское сельское поселение (д. Падаккасы, д. Адабай, д. Басурманы, д. Вурманкасы, д. Ландыши, д. Лапкасы, д. Молгачкасы, с. Оринино, д. Пикикасы, д. Семенькасы, д. Сендимир, д. Синьял-Оринино, д. Тереси, д. Чамыши), Сятракасинское сельское поселение (д. Сятракасы, выселок Хоракасы, д. Ирхкасы, д. Кашмаши, с. Оточево, д. Синьял-Оточево, д. Синьял-Хоракасы, д. Торинкасы, д. Шупоси, д. Юдеркасы, д. Ятманкино), Шатьмапосинское сельское поселение (д. Шатьмапоси, д. Авданкасы, д. Кадыкой, д. Карманкасы, д. Обрыскино, д. Сарчаки, д. Тиуши, д. Торханы), Чуманкасинское сельское поселение (д. Одаркино, д. Изедеркино, д. Карманкасы, д. Соляной, с. Чуманкасы, д. Шербаши, д. Ягаткино), Хорнойское сельское поселение (д. Хорной, д. Ижелькасы, с. Тойгильдино, д. Шептаки), Тораевское сельское поселение (с. Тораево, д. Анаткасы, д. Большие Токшики, д. Демкино, д. Ойкасы, д. Сене-Хресчен, д. Сюлово, д. Сюткюль, д. Сяран-Сирмы, д. Сятракасы, д. Тойшево), Юськасинское сельское поселение (с. Юськасы, д. Актай, д. Верхние Панклеи, д. Вурманкасы, д. Ильбеши, д. Нижние Панклеи, д. Новые Мадики, д. Нюреть, д. Падаккасы, д. Рогож, д. Старые Мадики, д. Сюмерткасы, д. Хорнкасы).

Юрисдикция судебного участка №2 будет распространяться на следующие сельские поселения: Большесундырское сельское поселение (с. Большой Сундырь, д. Адикасы, с. Большое Карачкино, д. Большие Татаркасы, д. Верхние Олгаши, д. Вомбакасы, д. Ешмолай, д. Кармыши, д. Кумыркасы, д. Малые Татаркасы, д. Мижары, д. Нижние Олгаши, д. Новое Шокино, д. Ойкасы, д. Оргум, д. Токшики, д. Турикасы, д. Шупоси, д. Ямолкино), Ильинское сельское поселение (д. Тренькино, д. Апчары, выселок Васильевка, д. Вурманкасы, с. Ильинка, д. Куськино, д. Магазейная, д. Мемеккасы, д. Ойкасы, д. Старое Шокино, д. Тябакасы, д. Хоп-Кибер, д. Хундыкасы, д. Хыркасы, д. Чебелькасы, д. Чураккасы, д. Шерек), Кадикасинское сельское поселение (д. Кораккасы, д. Анаткасы, д. Кадикасы, д. Калайкасы, д. Карамалькасы, д. Кюрегаси, д. Охтикасы, д. Сесмеры, д. Чурикасы, д. Шатракасы, д. Шомиково, д. Яраккасы), Москакасинское сельское поселение (д. Москакасы, с. Ахманеи, д. Ивановка, д. Калмыково, д. Лесные Хачики, д. Максикасы, д. Мурзаково, д. Нижние Хачики, д. Петровка, д. Пожедановка, д. Полевые Хачики, д. Рыкакасы, д. Сергеевка, д. Сидуккасы, д. Сюлеменькасы, д. Эхветкасы), Юнгинское сельское поселение (с. Юнга, д. Елкино, выселок Канаш, выселок Коминтерн, д. Кубасы, выселок Первое Мая, д. Сярмыськасы, д. Юнгапоси), Ярабайкасинское сельское поселение (д. Ярабайкасы, с. Акрамово, д. Верхний Томлай, д. Вурмой, д. Вускасы, д. Елачкасы, д. Ермаково, д. Идагачкасы, д. Иштереки, д. Костеряки, д. Милюдакасы, д. Нижний Томлай, д. Новый Томлай, д. Синьял-Акрамово, д. Сыбайкасы, д. Шоркасы), Ярославское сельское поселение (д. Ярославка, д. Елжихово, д. Елхово, д. Ихонькино, д. Лебедкино, д. Нискасы, д. Новое Чемеево, д. Хозанчино, с. Чемеево).

Таким образом, при подаче искового заявления, а также подаче заявления о привлечении лица к уголовной ответственности по делам частного обвинения, граждане должны обратиться в тот судебный участок, юрисдикция которого распространяется на сельское поселение, на территории которого проживает заявитель.

Данное правило распространяется также и на направление материалов по делам об административных правонарушениях.

**В. ЗАХАРОВ,**
**помощник судьи**
**Моргаушского районного суда ЧР.**

## Официально

Приложение № 6
к решению районного Собрания депутатов
от 30.11.2007г.
“О районном бюджете Моргаушского
района на 2008 год”

**РАЙОННАЯ ИНВЕСТИЦИОННАЯ ПРОГРАММА НА 2008 ГОД**

| № п/п | Наименование объектов | Сумма (тыс. руб.) |
|---|---|---|
| **1** | **Полигон по обезвреживанию ТБО** | 4462,7 |
| | **Всего:** | 4462,7 |

Приложение №7
к решению районного Собрания
депутатов от 30.11. 2007г. №С-22/3
“О районном бюджете Моргаушского
района на 2008 год”

**Расходы Моргаушского района, учтенные при распределении средств из Фонда компенсации и субсидии на реализацию Федеральных и Республиканских законов, указов и программ на 2008 год**

| Наименование расходов | Сумма (тыс. руб.) |
|---|---|
| Предоставление дотаций поселениям на выравнивание финансовых возможностей по решению вопросов местного значения поселений | 25618,0 |
| Государственная гарантия граждан прав граждан на получение общедоступного и бесплатного начального общего, основного общего, среднего (полного) общего образования | 96669,1 |
| Государственные полномочия по созданию комиссий по делам несовершеннолетних и защите их прав и организация деятельности таких комиссий | 133,4 |
| Создание и обеспечение деятельности административных комиссий для рассмотрения дел об административных правонарушений | 15,9 |
| Государственные полномочия по обеспечению жилыми помещениями иных категорий граждан, указанных в части 1 ст. 11 Закона ЧР «О регистрации жилищных отношений» | 278,8 |
| Государственные полномочия по ведению учета граждан, нуждающихся в жилых помещениях и имеющих право на государственную поддержку на строительство (приобретение) жилых помещений | 0,6 |
| Государственная регистрация актов гражданского состояния | 644,8 |
| Государственные полномочия составление (изменение, дополнение) списков кандидатов в присяжные заседатели федеральных судов общей юрисдикции в РФ | 9,2 |
| Осуществление полномочий по первичному воинскому учету на территориях, где отсутствуют военные комиссариаты | 973,7 |
| Ежемесячные денежные вознаграждения за классное руководство в государственных и муниципальных общеобразовательных школах | 4190,4 |
| Субсидии на денежные выплаты медицинскому персоналу фельдшерско-акушерских пунктов, врачам, фельдшерам и медицинским сестрам «Скорой медицинской помощи» | 2999,3 |
| Субсидии на комплектование книжных фондов библиотек | 73,6 |
| Субвенции по выплате компенсации части родительской платы за содержание ребенка в муниципальных образовательных учреждениях, реализующих основную общеобразовательную программу дошкольного образования | 1209,0 |
| Субвенции по организации и осуществлению деятельности по опеке и попечительству | 126,4 |
| Субвенции на выплату единовременного пособия при всех формах устройства детей, лишенных родительского попечения, в семью | 136,0 |
| Всего | 133078,2 |

## Вулакан пултарулăхĕ

# Санах юрататăп

Савни мана калать,
Эс мана куç хыврăн...
Кам-ши çавна курнă,
Ма суяççĕ-ши?

Юрататăп, юрататăп
Савниçĕм сана.
Юрататăп, юрататăп
Пул ялан манпа.

Халь кăна эп уçрăм
Урмăш куçăма.
Тĕлĕкре-ши куртăм
Савни эп сана?

Савни мана калать,
Эс мана чуптурăн.
Кам-ши çавна курнă,
Ма суяççĕ-ши?

Ăнсăртран эп туйрăм
Хам юратнине.
Чăнахах-ши тупрăм
Чĕрем хушнине?

Савни мана калать,
Кĕç ача пулать.
Кам-ши çавна курнă,
Ма суяççĕ-ши?

Ĕнтĕ ман мĕн тăвас,
Çаврăнса тăрас?
Çук!
Утас ура уттипе,
Чуппипе чупас.

**Василий МАКСИМОВ.**

Калайкасси ялĕ.